9а
2921
40-184



НЕСТЕР ЯНГАС

# ПАРНЕ

СĂВĂСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1940

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве 5.
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
18 июля 1940 г.
Подпись

ЧĂВАШ
ГОСИЗДАТ
1940

НЕСТЕР ЯНГАС

# ПОДАРОК

*СТИХИ*

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ—1940

НЕСТЕР ЯНГАС

# ПАРНЕ

*СĂВĂСЕМ*

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
ШУПАШКАР—1940

## ТУПМАЛЛИ:

### I. ÇУЛПУÇСЕНЕ

*Стр.*

Мавзолей . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Тусăмăр, çулпуçăмăр . . . . . . . . . . . . . . 10


### II. ЯТСĂР ГЕРОЙСЕНЕ

Михаç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Амăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Тимĕрçĕ хĕрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Çамрăксен юрри . . . . . . . . . . . . . . . 28


### III. ТУССЕНЕ

Крымра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Крымри кăмăл . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Манăн тус . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Кĕтни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
Уйрăлни . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
P. S. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44


### IV. АЧАСЕНЕ

Куççуль пирки . . . . . . . . . . . . . . . 47
Сăпка юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Ачасене . . . . . . . . . . . . . . . . . . 52
Аван пире . . . . . . . . . . . . . . . . . 55

# 1
# ÇУЛПУÇÇЕНЕ

## МАВЗОЛЕЙ

Мăнаçлă Кремль. Мавзолей.
Хисеплĕ караул. Ильич.
Вăл вилнĕ,—
Пурнăçпа телей
Хăварнă чĕррисем валли.

Выртать-çке тупăкра Çулпуç.
Куççуль тумлать гранит çине...
Суккăррине вăл панă куç;
Вăл çăкăр панă выççине.

Халь ак ун палăкĕ патне
Утать чăвашĕ, вырăсĕ...
Чĕре ăшне ун ыр ятне
Хывать пур халăх юрăçи.

Ун ячĕ—
Аслă Пурăнăç.
Çак ят çĕр чăмăрĕ çинче

Нихçан та сӳнмӗ—
Пурӑнӗ
Мӗнпур этемлӗх чӗринче.

Пырать ун палӑкӗ патне
Мӗнпур ӗçхалӑх çул-йӗрӗ.
Вӑл çӗкленет тӗнче çине
Пур палӑкран та çӳлерех.

Çӗр çаврӑнӗ. Çул хыççӑн çул
Иртейӗ.
Иртӗç ӗмӗрсем.
Шарлатӗ шыв—тӗпренӗ чул;
Çил касӗ—çийӗнӗç сӑртсем...

Анчах ун аслӑ палӑкӗ
Тӗпренмӗ, çийӗнмӗ нихçан.
Ӑна ялан ӗçхалӑхӗ
Упрӗ, чӗре пекех, пӑхса.

Ун чыслӑ алӑкӗ умне
Ялан тап-такӑр çул тӑрӗ.
Вӑл сапӗ хӗм тӗнче çине
Йӑлтӑр хӗвелӗн-çӑлтӑрӑн.

Çитет ку вӑхӑт!—
Пырӗçӗ
Кунта, çӗршыв хуçи пулса,
Испанец, турок, нимӗçӗ...—
Пур халӑх та тӑванланса.

Çĕклене халăх вĕçĕмсĕр
Çулпуç ялавĕ айĕнче.
Юлашки хут кисренĕ çĕр,
Тĕпрен çĕнелĕ çут тĕнче!

* * *

Мăнаçлă Кремль. Мавзолей.
Хисеплĕ караул. Ильич.
Вăл вилнĕ,—
Пурнăçпа телей
Хăварнă чĕррисем валли.

Тăрать,
Салтак шинелĕпе,
Гранит трибун çинче этем,—
Тăрать соратникĕсемпе
Чи шанчăклă Вĕренекен.

Çак этеме саламласа,
Хаваслă йăлтăра питпе
Ман халăх сыввăн та тасан
Иртет ак Хĕрлĕ Площадьпе.

Иртет çулпуçĕ умĕнчен
Илемлĕ пурнăçпа телей.
Тăванлă халăх хумĕнче
Ялтрать, маяк пек, Мавзолей!

1939.

## ТУСĂМĂР, ÇУЛПУÇĂМĂР

*Халăх юрринчен*

Алтăр-çăлтăр çутă, теççĕ,
  Хĕвел ăшă, теççĕ.
Çăлтăртан та çутă эсĕ,
Хĕвелтен те ăшă эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Халлапсем ламран çӳреççĕ:
  Али вăйлă, теççĕ.
Алирен те вăйлă эсĕ,
Улăпран та улăп эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Ала-Тау çӳллĕ, теççĕ,
  Ылттăн сийлĕ, теççĕ.
Çӳллĕ ту пек, çӳллĕ эсĕ,
Чаплă эсĕ, тавлă эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Тинĕс пит хăватлă, теççĕ,
  Пит ĕçченçĕ, теççĕ.
Тинĕс пек хăватлă эсĕ,
Тинĕс пек ĕçченçĕ эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Çурхи çăмăр ăшă, теççĕ,
  Пархатарлă, теççĕ.
Çăмăр пек тивлетлĕ эсĕ,
Кăмăллă, ыр чунлă эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Асамат кĕперĕ, теççĕ,—
  Телей çулĕ, теççĕ.
Пирĕн ырлăх çулĕ эсĕ,
Пирĕн пурлăх çулĕ эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Ылттăн хаклă, сумлă, теççĕ,
  Ылттăн—пурнăç, теççĕ.
Ылттăнран та хаклă эсĕ,
Пирĕн аслă пурнăç эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Хурçă çирĕп, пиçĕ, теççĕ,
  Вутчулĕ пек, теççĕ.
Хурçăран та çирĕп эсĕ,
Ĕмĕрхи вутчулĕ эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Çиçĕм вичкĕн, сивчĕ, теççĕ,
  Çиçĕм—вут хĕç, теççĕ.

Тăшмансемшĕн вут хĕç эсĕ,
Вичкĕн эсĕ, çивчĕ эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

Хўхĕм юрăсем çўреççĕ:
  Сталин—юрă, теççĕ.
Чи илемлĕ юрă эсĕ.
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăн эсĕ,
  Тусăмăр, çулпуçăмăр!

1938.

# II
# ЯТСĂР ГЕРОЙСЕНЕ

## МИХАҪ

Юнашар ик вилтӑпри:
Мрамор склеп пӗри,
Тепри—
Пӗчӗкҫеҫӗ тӗмӗ ҫеҫ,
Ешӗл курӑк ун ҫинче.

Мрамор склеп,—
Ҫыврать-мӗн пан
Тарӑн ыйхӑпа унта.
Пан—панах ҫав,—мӗн калан!—
Тупӑкӗ те мрамортан.

Вилнӗ, имӗш, ӑнсӑртран
Ҫак «хисеплӗ», «ырӑ» пан.
Виличчен,
Тӗп пуличчен,
Ҫичӗ ял ун аллинчен,
Татӑк ҫӑкӑр йӑлӑнса,
Тӳснӗ мӑшкӑл, хӗн-асап.

Çичĕ ял—
Çичĕ çăва—
Тухайман нихçан çăва:
Кашни çул кĕр мăнтăрне
Пан тустарнă вĕсенне.

Пурăннă çулталăкпех
Çак пан вăрă-кайăк пек:
Ни акман вăл, ни вырман,—
Пурте янтă ун ялан.

Тĕрĕс мар-çке çут тĕнче!—
Çичĕ ял ӳплисенче
Шăхăрайнă саламат,—
Пурнăç пулнă касамат.

* * *

Пан тăрать крыльца çинче,
Тăлăп унăн çийĕнче;
Те вăл тилĕ тирĕнчен,—
Пĕлме çук,—тем мурĕнчен..
— Эй, Михаç!
Ăçта Михаç!?
— Умăртах, пан... эп—сиччас...
— Кӳл-ха хăвăрт утсене!
Лар аçу кусли çине!

— Эй, Михаç!
Вăрт-варт, Михаç!
— Вăрт-вартах эп... эп—сиччас!..

Пан ларать кӳме ӑшне,
А Михаҫ—кусла ҫине.
Ӑшӑ тӑлӑп уртнӑ пан,
А Михаҫӑн—кив сӑкман.

„Ну-у! Атя, хускалӑрсам!
Уҫӑласшӑн „ырӑ“ пан.
Сире сӗлӗ хӑвалать,
Пире хурлӑх хӑвалать“.—

Чуптарать ак катаччи
Хай пана батрак ачи.

Ҫичӗ ял юлать хыҫа.
Тӗлӗнет шалт пан-хуҫа:
Пар-хӑрах ут,—ак тӗнче!—
Пӗчӗк „ямшӑк“ аллинчех
Кустарать те кустарать,—
Ҫил ҫук чух ҫил кӑларать!
— Молодец!—тет тавлӑн пан,—
Путсӗр аҫунах хыван!

Пар-хӑрах ут тулхӑрать,
Тулхӑрать те ыткӑнать...

Пар-хӑрах ут пасарать.
Пана ыйхӑ пусарать.
Тӗлӗрет пан.
Ыйхӑра
Тутлӑ тӗлӗксем курать.

Ятлаçать Михаç пана:

„Мĕн çитмест тата сана?!—
Тырă санăн маччаран,
Эпĕр выçă та çарран.
Улăх сан—чечек те сан,
Вĕтлĕх сан—çырли те сан,
Кӳлĕ сан—пулли те сан.
Эп те сан мĕн... Пурте сан!—
Мĕншĕн тертлĕ халăха
Шар тăван эс кăлăхах?“.

Ылханать Михаç пана:

„Пусмăрлан эс аппана...
Айăпсăр хĕне-хĕне,
Эс вĕлертĕн аттене...

Ĕнтĕ тăлăх-çке Михаç...
Кам-ха пăхĕ Михаçа?
Кам ачашлĕ Михаçа?..
Мĕншĕн пĕчĕк-ши Михаç?!“

Суд тăвать Михаç пана:

„Вилĕм çеç çитмест сана!
Айăпу, „хисеплĕ“ пан,
Çак çĕртен те пысăк сан.
Пĕт, тăшман!

Пĕт, нухайкка!
Сиктерем сире—вакка!*

Пан çыврать-ха,
Пан канать...

Пар-хăрах ут ыткăнать,
Те çулпа, те çулсăрах,
Хăвăртрах та хăвăртрах...
Юр, пĕр юр çеç таврара.
Çил ӳлет-çке хăлхара.
Сивĕ, сивĕ-çке пит те.
Вичкĕн çил касать пите;
Сăкман витĕрех кĕрет,
Чĕрене çӳçентерет.

Акă айлăм.
Акă Збруч.
Утсене чарать Михаç: „Тпру!"
Тинкерет Михаç, пăхать:
„Шыв ăçта шăнмастчĕ-ха?
Э... унта иккен, унта!"
— Ну-у, хускалăр! Ну-у, атя!..

Пар-хăрах ут ĕрĕхет,
Çыр хĕрнех çитсе кĕрет...
Вăранать пан ыйхăран,
Кăшкăрать хаяррăн пан:

— Эй, Михаç!
Ăçта Михаç!?

— Эп кунтах-ха... Эп—сиччас!
Эп си-иччас!—тет те Михаç,
Ывтăнать кусла çинчен,—
Çакланать тем мурĕнчен
Кив сăкман...

. . . . . . . . . . . . .

Ăçта Михаç?!.

Хăмпăсем çеç çаврăнаç,
Сĕлкĕш шыв çине тухса...
Панпала пĕрлех Михаç
Путнă-çке шыва...

Сĕм каç
Талкишпех хуплать çĕре.
Çил, Збруч тăрăх кĕрт хывса,
Çаврăнать йĕре-йĕре.

* * *

Юнашар ик вилтăпри:
Мрамор склеп пĕри,
Тепри—
Пĕчĕкçеçĕ тĕмĕ çеç,
Ешĕл курăк ун çинче.

Склепра—пан.
Склеп айккинче,
Пĕчĕк тĕмĕ айĕнче,
Пĕчĕк „ямшăк" çывăрать.
Хĕл иртет, çу çывхарать:

Ешӗрет ялан чечек
Унӑн вилтӑпри ҫинче.

* * *

О, Михаҫ! О, шӑллӑм ман!
Тӑпру ҫӑмӑл пултӑр сан.

Пирӗн аслӑ ҫӗршыва,
Пархатарлӑ ҫӗршыва,
Хур тума хӑйсан тӑшман,
Сан пекех пуласчӗ ман!
Сӗмсӗр вилӗм ҫывхарсан,
Аслӑрах вилесчӗ ман!

1939.

## АМӐШӖ

Виç тавлӑк иртнӗ—таврӑнман
Ун упӑшки тӑван килне...
Юратнӑ амӗш!
Куç хупман
Самант та вӑл çак касхине.

Таçта,
Çӗре кисрентерсе,
Ухлетнӗ тупӑ сассисем.
Чун-чӗрене çӳçентерсе,
Таçта хӗмленнӗ саласем...

Салатнӑ вилӗм ялсене
Тискер Деникин Дон-çире...
Сиктернӗ амӗш ачине
Юрла-юрла, йӗре-йӗре:

„Пани, намӑса пӗлмесӗр,
Шар кӑтартрӗ те пире,—

Ыввлăм, çуралтăн эсĕ,
Вывьăх пек, ют витере.

Кăкăр типрĕ те—усрарăм
Сурăх сĕчĕпе сана...
Офицер ав—хуса кайрĕ
Сурăха та хыснана..."

Юрлана амăшĕ.
Пӳрте
Хуллен-хуллен кĕнĕ пĕр çын:
„Сывах-и?.."
„Сывă-ха пурте...
Ах, тур!.. Сана амантрĕç-им?!"

„Кăшт çеç—хăрушă мар...
Яла
Кĕçех кĕреççĕ хĕрлисем.
Сĕт туп... Тăван пек хăнала...
Пĕлен:
Вĕсем—ман тусăмсем...

Кала... Пĕлтер чи аслине:
Тасатрăмăр тăшмансенчен
Эпир леш Целина çулне...
Сыхланччăр Сальск çывăхĕнче...

Канам-ха... эпĕ..."—

Сулланса,
Çын ӳкнĕ йывăррăн çĕре...

Вăл вилнĕ—
Лăпкăн, йăпанса;
Тапман ĕнтĕ мăнаç чĕре.

Каланă амăшĕ вара:

„Пăхсам, ачам, аçу çине:
Касма вĕрен эс сăпкарах
Деникинсен пуçĕсене!

Асрах тыт эс, ан ман:
Аçу
Пуç хучĕ пирĕншĕн çак кун.
Тек саншăн тăвăр пулас çук
Çак çут тĕнче,
Çак пӳрт,
Сăпку!

Асаплăх юлĕ хыçала.
Ан йĕр, ачам... Йăпан-ха, кул!—
Кĕреç ав хĕрлисем яла...
Вĕсем пекех эс паттăр пул!
Пул çивчĕ хĕç эс,
Çиçĕм пул!“

1939.

## ТИМĔРÇĔ ХĔРĔ

Кăшт чапраçрах кăвак куççем!
Ăçта сӳнтĕр эсир, ăçта?!.

Таçта кĕрлетчĕç тупăсем,
Çунатчĕç саласем таçта...

Туслашнăччĕ çав кунсенче
Эп тимĕрçĕ хĕрĕпеле.
Чиперччĕ хăй.
Мăйĕ синче
Çунатчĕ турпалли—телей!

Пĕр ир мăнаçлă Кремльтен
Саланчĕ сас ламран-лама:
«Çĕршыв хăрушлăхра... Çĕклен,
Ĕççамрăкĕ атакăна!»

Горкомолта, эпир унпа
Путевка илтĕмĕр пĕрле:

Ман çул вырттатчĕ Ташкента,
Ун каймаллаччĕ Çĕпĕре.

Кам тухнă аслă çул çине
Телей сунмасăр туссене?!—
Пĕр каç хай тимĕрçĕ хĕрне
Эп чĕнтĕм Атăл хĕррине.

Кăшт чапрасрах кăвак куçсем,
Темле салхулăхпа çиçсе,
Шап-шур каракуль хумсене
Çав каç сăнарĕç ирччене...

Каларĕ вăл:
«Эппин—сывпул...
Вутра ан çун, шывра ан пут!
Тăшманшăн вутлă çиçĕм пул!
Чупту! Тен, ку—юлашки хут...»

Вăл кайрĕ.
Кайрăм эпĕ те.
Çунмарăм эп вутра.
Шывра
Путмарăм,—
Ирĕк çĕршывран
Тăшман тасалчĕ çӳпĕ пек!

Халь ак,—
Нумай çулсем иртсен,
Эп çав каçа аса илсе,

Тухатăп Атăл хĕррине.—
Кĕтетĕп тимĕрçĕ хĕрне!

Анчах... Таса кăвак куççем!
Çут Атăл хĕрринче ниxçан
Кулса çиçеймĕç тек вĕсем...—
Сÿнтерне вĕсене тăшман.

Шавлаç хуллен хумсем:
„Сывпул...
Вутра ан çун, шывра ан пут!
Тăшманшăн вутлă çиçĕм пул!
Чупту! Тен, ку—юлашки хут..."

1939.

## ÇАМРĂКСЕН ЮРРИ

*Халăх юрринчен*

Çӳл-ту çинче, ай, мĕн пур?
Иăрăс тополь, хурăн пур,
Ту илемне кӳреççĕ,—
  Çӳллĕ ӳсĕр! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Каччă-трактористсем пур,
Хир илемне кӳреççĕ,—
  Çĕршыв пирĕн! теççĕ.

Сад-пахчинче, ай, мĕн пур?
Улми те пур, çырли пур,
Сад илемне кӳреççĕ,—
  Татăр, çийĕр! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Стахановка-хĕрсем пур,
Ĕç илемне кӳреççĕ,—
  Суйлăр, савăр! теççĕ.

Çаран çинче, ай, мĕн пур?
Тимĕр-кăвак утсем пур,
Пуçа ухса çӳреççĕ,—
Йĕнер кирлĕ! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Кавалеристсем те пур,
Орден çакса çӳреççĕ,—
Çĕршыв сыхă! теççĕ.

Çӳл-тӳпере, ай, мĕн пур?
Ки-как кайăк-хурсем пур,
Кăнтăралла вĕçеççĕ,—
Сывă юлăр! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Паттăр летчиксем те пур,
Полюсалла вĕçеççĕ,—
Сывлăш пирĕн! теççĕ.

Çут кӳлĕре, ай, мĕн пур?
Шурă акăш-хурсем пур,
Саркаланса ишеççĕ,—
Ишĕр, ишĕр! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Харсăр капитансем пур,
Тинĕс тăрăх ишеççĕ,—
Шыв та пирĕн! теççĕ.

Çăкалăхра, ай, мĕн пур?
Шăпчăк пур, саркайăк пур,
Çунат çапса юрлаççĕ,—

Юрлăр, юрлăр! теççĕ.
Пирĕн ялта, ай, кам пур?
Сăвăç-юрăççем те пур,
Сталин çинчен юрлаççĕ,—
Сталин—атте! теççĕ

1938.

# III

# *ТУССЕНЕ*

## КРЫМРА

Ак вăл Крым!
Ак Севастополь.
Рифма янтă, ан шыра:
Кипарис та каврăç, тополь,
Плющ та пур мĕн хушăран.

Ыткăнать,
Васкать машина
Сăрт çинчен сăрт çинелле...
Шофер—
Харсăр кăнтăр çынĕ:
Апата, тет, çитмеллех!

Ак—Байдар хапхийĕ...
Тинĕс!!!
Вĕççĕр-хĕрсĕр сарăлса—
Те хура вăл, те вăл симĕс—
Йăтăнать ак карласа...

Сÿ! тăвать чĕре...
Çитетпĕр
Акăш пек шур Ялтăна.—
Тинĕс, тинĕс, тинĕс!— тетпĕр,—
Чăпăл ту эс хăнуна!..

Пурнăç лайăх,
Пурнăç ырă
Кĕленче керменсенче.
Янăрать илемлĕ юрă
Кашни сăрт хысакĕнчех.

Тĕлкĕшет, кăвар пек, роза
Пур çĕрте, пур вырăнта.
Чӳлмекри хăна—
Мимоза
Йывăç пек иккен кунта!

Кăнтăр çав кунта!
Ир-каçăн
Упа-Ту ав тинĕсрен
Шыв пехлет;
Потоп çăтасшĕ,
Хăрамасть кӳпĕнесрен.

Пур «Массандра»—
Шавлă вырăн
Тараватлă Ялтăра;
Ун эрехĕ, хĕр пек, ырă,
Куç хĕсет те—
Ялтăрать!

Ялтăрать!
Ана ĕçмесĕр
Пĕчĕк тунсăх манăнмасть;
Ма, тесен,—
Кунта семьесĕр
Килнĕ эпĕр юсанма.

Ах, çапах,
Мĕн-ма-ши, арăм,
Сансăр тăвăр пек тĕнче...
Пушă ман стакан,—
Юнарăн
Эс мана ун тĕпĕнчен...

Юнасам, юнах!—
Ай-Петрин
Мамăк пек чалми çине
Пĕр тутар мана çӳретрĕ,—
Чи çӳле,
Чи тӳпене!

Хумсемпе вăй вичрĕм эпĕ
Тинĕс урнă кунсенче.
Хĕвелпе вылярăм эпĕ
Тинĕс чулĕсем çинче...

Пурпĕрех,
Юратнă арăм,
Сансăр тăвăр пек тĕнче,—
Эс ман асăмран тухмарăн
Хам вăй илнĕ кунсенче.

Тинĕс,
Ялта,
Севастополь
Ĕнтĕ юлчĕç хыçала...
Кипарис та кавраç, тополь,
Сывă пулăр кăçала!

1939.

## КРЫМРИ КĂМĂЛ

1.

Çĕрле.
Ĕнтĕ гавăнелле васкать
Шап-шурă парус лăпкă тинĕспе.
Ĕнтĕ тĕтре те çăралса юхать
Асамлăн тĕлĕрен ту хушшипе...

Çак лăпкă самантра,
Юратнă арăм,
Юратнă пĕчĕк ывăлăм,
Сире
Аса илетĕп эпĕ...
Тунсăхларăм,
Çывăх тăванăмсем, сирĕнсĕр эп.

Шухăшăмпа сире тытса илейрĕм
Йăлтах эп хамăн ăшă ытама.

Сӑртран та ҫӳлерех йӑтса ҫӗклерӗм
Шухӑшӑмпа
Эп, ывӑлӑм, сана!

2.

Ёнтӗ тавралӑх шӑп.
Шап-шур тӗтре
Канса выртать сӑрт кӑкӑрӗ ҫинче.
Ман ҫывӑх тусӑм,
Эс манран инҫе ..—
Ҫывратӑттӑм хам та ҫак сехетре
Сана эп ӑшӑ аллӑмсем ҫинче!

1937.

## МАНĂН ТУС

Кипарис та тополь сад тавра.
Ӳстерет унта ман тус инжир.
Ун пек хĕр тек пур-ши çĕршывра?
Ылттăн çӳçлĕ,
Ĕнчĕ куçлă хĕр пур-ши?!

Унăн ароматлă пахчинче
Ешĕрет-çке кăнтăрти тĕнче!
Розăсем, кăвар пек, хĕмленсе
Тĕлкĕшеççĕ сăрт хысакĕнче...

Çĕршывра нумай-çке ăш кĕтес!—
Ют çĕрте-и эсĕ,
Пурпĕрех!—
Хĕр сăнать таçта та йĕкĕте,
Куç хывать-çке йĕкĕт те хĕре,—
Туслашать таçта та ик чĕре.

Эп паллашрăм кăнтăр хĕрĕпе.
Ылттăн сар çўçсем,
Ĕнчĕ куçсем
Кунĕ-кунĕпе те çĕрĕпе
Йăлтăртатрĕç ман умра çиçсе.

Эп юратрăм ылттăн Крым хĕрне.
Ун садне илентĕм эп ялан.
Антăм шавлă тинĕс хĕррине,
Сăрт тăрне хăпартăм унпалан...

Каç хуплать-и бархатпа çĕре,
Лăпкă тинĕс хумсене аран
Кустарать-и,—
Тусăмпа вара
Эпĕр çеç юлатпăр тĕнчере!

Пĕр эпир кăна-çке тĕнчере
Чи телейлĕ мăшăр пек вара!
Вара чул та ĕнерсе парать
Юрату юррисене пире!

Хĕр ларать-и ман чĕркум çине,
Эп шыратăп-и ун тутине,—
Пусарса лартать куçĕ çине
Вара ту та шурă çĕлĕкне!

Кипарис, салтак пек, хураллать
Пирĕн тараватлă туслăха...

Хӗр канать...
Кӑҫса-кайсах кулать.
Хӗр салхулланать сасартӑках...

Хӗр путать кӗҫ тарӑн шухӑша,—
Шавлӑ тинӗс хӗррине чӗнет.
Тинӗс чӑпӑллать те,
Вӑй хушать
Ҫӳресе ӗшеннӗ туссене.

Эреветлӗн те теветлӗн хӗр юрлать
Шавлӑ-шавлӑ тинӗс умӗнче.
Эреветлӗн те теветлӗн хӗр юрлать
Ҫывӑх тусӗ,
Савнӑ тусӗ ҫумӗнче:

«Ырлӑха эс ырӑпах ыр ту.
Кӑмӑл туртӑмне упра ялан.
Нихӑҫан та пирӗн юрату
Ан хӑвартӑр чӗрере суран!»

Кипарис та тополь сад тавра.
Пуҫтарать ӗнтӗ ман тус инжир.
Ун пек хӗр тек пур-ши ҫӗршывра?
Ылттӑн ҫӳҫлӗ,
Ӗнчӗ куҫлӑ хӗр пур-ши?!

1939.

## КЁТНИ

Эс каларăн: „Унта уçă,
Унта хӳтĕ, унта лайăх,
Улăх, шыв, арман унта...“
Кăвакарчĕ ĕнтĕ шуçăм;
Чĕвĕлтетрĕ ĕнтĕ кайăк...—
Эс анмарăн-ха ялтан.

Эп кĕтетĕп. Эс анмастăн.
Çак самант кампа-ши эсĕ?..
Эп пĕччен. Аврать арман...
Çук, арман та авăрмасть-мĕн,—
Саншăн, канăçа пĕлмесĕр,
Чун-чĕрем вăркать-мĕн ман!

1939.

## УЙРĂЛНИ

Ароматлă пирусу сан
Пĕр сӳнет те пĕр çунать..
Эс—чĕнместĕн.
Ырă тусăм,
Тăвăр пек кăшт ман чуна...

Тăвăр, тĕттĕм сирĕн паркăр—
Ни ларма, ни çӳреме...
Калаçар-ха ăшшăн,—
Лар-ха,
Пусарам эп чĕреме.

Йывăр, йывăр сӳнтермешкĕн
Ăшра çуннă пушара...
Эсĕ ав—
Пĕччен çӳресшĕн...
Мĕн пур пирĕн хушăра?

Мĕн пур?—
Çын каçми вăрман-и?
Е пит çӳллĕ пăрлă ту?..—
Уйăрлар эппин тату.

Пирусу пек сӳнтĕр манăн
Анăçусăр юрату.

1939.

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

P. S.

Çул хĕрринчи лăс-хурама
Çулçŭрене йăпатнă пек,
Сана халь çакă çыру ман
Самантлăха йăпатĕ çех.

Çулсем шусассăн „кĕр енне“,
Ăна эс тимлĕн вулăн та,—
Ăнланăн:
Туслăх куркине
Эп саншăн йăтнăччĕ унта!

1939.

IV

# АЧАСЕНЕ

## КУҪҪУЛЬ ПИРКИ

Кӑнтӑрлапа эп—журналист.
Ҫӗрле
Ҫыратӑп сӑвӑсем кӑвакҫутчен.
Пӗрре,
Балладӑри геройсемпе пӗрле
Эп йӗнӗ те,
Эп кулнӑ та иккен.

Эп йӗнӗ мӗн.
Ҫак самантра шӑпах
Ман виҫ ҫулхи ача вӑраннӑ та:
„Атте... атте!—тет селӗп сасӑпа,—
Тумлям, тумлям тумлать шан куҫӑнтан..."

Эп таврӑнтӑм пӳртри чӑн тӗнчене:
Хам ачана эп суйрӑм пуҫласа:
„Тумлать ҫав,—терӗм,—
Халь тулта, ачам,
Ҫӳрет чи ӑша-ӑшӑ ҫуркунне!"

1939.

## САПКА ЮРРИ

*Джамбул юррисенчен*

Ҫывăр, ывлăм, канлĕ пул.
Тăмрипе вылять Джамбул,—
Ырă аллипе суйлать вăл
Саншăн йĕс хĕлĕхсене;
Сăпкуна ярăнтарать вăл,
Шăппăн юрă та юрлать вăл,—
Ҫывратасшăн вăл сана,
Ҫывăр, чĕппĕм, пĕр-кана,—
Тяппине-паппине...

Сенкер ҫăлтăр тĕлĕрет.
Тĕлĕреҫҫĕ кĕтӳре
Мăнтăр, тутă выльăхсем:
Ҫăмламас качакасем,
Тĕвесен пăрушĕсем;
Ылттăн тĕслĕ тихасем те,
Мăкла-пуҫлă пăрусем те,
Пăтьăр-пăтьăр путексем те,—
Тĕлĕр эсĕ те, пепкем.

Лĕпĕшсем çаран çинче,
Пулăсем шыв тĕпĕнче
Лăпкăн, канлĕн тĕлĕреççĕ;
Тĕлĕрет шыв хĕрринче
Хăмăш та, пуçне пĕксе;
Сывлăм сыпнă чечексем,
Кӳлĕсем, çеçенхирсем,—
Пурте, пурте тĕлĕреççĕ.
Меншĕн тĕлĕрместĕн эсĕ,
Хура куçлă ман пепкем?

Çывăр, пĕчĕкçĕ пепкеçĕм,
Ашă алăра халь эсĕ,—
Сталин çутă Кремльтен
Пĕтĕм çĕршыва сăнать.
Вăл сăнать, пепкем, сана та,
Вăл савать, пепкем, сана та;
Саншăн, пĕчĕкçĕ пепкем,
Çĕршывăм ответ тытать!

Аслă çĕршыв ывăль эсĕ,
Савнă пĕчĕкçĕ пепкеçĕм.
Аçунтан та ытларах
Шухăшлать халь Мускавра
Аслă Сталин сан çинчен.
Вăл сана ялан телейлĕ,
Ăслă, сывлăхлă, кĕрнеклĕ
Ӳстересшĕн çĕр çинче.

Пит телейлĕ эс, пепкеçĕм,—
Çĕршывран илетĕн эсĕ

Пĕчĕкрен мĕн кирлине!
Эс унран телей илетĕн,
Тарăн шухăш, ăс илетĕн,
Çирĕп сывлăх, вăй илетĕн,—
Çĕнетме çут тĕнчене,
Çĕнтерме тăшмансене.

Саншăн çут тĕнче хаваслă,
Пур çулсем те уçă, аслă.
Саншăн ешĕл садсенче
Эреветлĕн шăпчăксем
Хӳхĕм юрă ĕнереççĕ.
Симĕс улăх-çарансем,
Хурçă улăп-заводсем,
Ылттăн, ĕнчĕ, шахтăсем
Пурте сан вĕсем, пепкеçĕм.

Куçусем сан çăлтăртан та
Çутăрах, çут пурçăнтан та
Çемçерех сан çӳçӳсем,—
Çитĕнетĕн эс кĕрнеклĕн.
Çĕршыва илем кӳрсе,
Пурăнăн ялан телейлĕ
Эсĕ—хура куçлăскер,
Чиперскер те йăрăскер,
Харсăр паттăр пуласскер.

Эпĕр ӳснĕ урăхла,
Эпĕр ӳснĕ йытăлла.
Май хĕвелĕ айĕнче

Çуткам питлĕ ачасĕм
Хĕрлĕ ялавсене çÿлĕ
Çĕклесе вĕлкĕштерсен,—
Чĕтренет тумлам куççулĕ
Ватă юрăç куçĕнче.

Ӳссе çитĕн, йĕкĕт пул,
Умăнта сан çутă çул.
Çĕршыв тăрăх савăнса,
Çĕнтерÿллĕн, пултаруллăн,
Тÿррĕн кайăн эс утса.
Йăрă пионер та пулăн,
Харсăр комсомолец пулăн,
Ӳсĕн большевик пулса.

Çывăр, пĕчĕкçĕ казах,
Çĕршывра пирĕн пачах
Хуйхă пулмĕ,—паттăрсем
Вичкĕн, тимлĕн хуралласçĕ
Санăн аслă çĕршывна.
Аслă Сталин, Совет влаçĕ
Халь пире, хисеплесе,
Чи телейлĕ пурнăç пачĕç.
Ырă пирĕн самана!
Çывăр, ывлăм, пĕр-кана!—
Паппине-тяппине...

1937.

## АЧАСЕНЕ

*Джамбул юррисенчен*

Ачамсем, сывах-и?
Эп — хавас!
Ха, пылхурчĕ пек сĕрлеç вĕсем...
Вачă юрăç, тăмрине илсе,
Килчĕ сирĕн савăк уява
Сирĕнпе хăналанас тесе.

Эп, курпун тĕве пек,
Ватă, ачамсем...
Выльăр, кулăр! —
Кăмăллать старик сире.
Эсĕр,
Манăн савнă ывлăмсем,
Выляса сикен путексемпе пĕрех..

Сирĕншĕн тĕнче хавас, хитре!
Ялкăшса çунаççĕ тўпере

Сиреншĕн, ахах пек, çăлтăрсем,
Сар хĕвел савса лăпкать сире; —
Пурнăç сирĕн, юрă пек, хитре!

Сталин —
Çĕр çинчи чи пысăк çын—
Тăванран та çывăх вăл сире.
Сталин — çут хĕвел вăл;
Ун ăшши
Пур çĕрте те ачашлать сире.

Сталин кăмăллă пур çынсенчен,
Вăл сире ĕçчен хуласенчен,
Савăнăçлă пурăнччăр тесе,
Ярса пачĕ капăр теттесем,
Букварьсем,
Хитре кĕнекесем...

Аслă Сталин —
Ĕмĕрхи чинар,
Çĕкленет вăл çӳлĕ те патмар;
Çулçисем ун — ĕнчĕ те мерчен...
Пит аван сире ун хӳттинче!

Сталин сирĕн савăнăçăрпа пурнать,
Ăс-тăн илччĕр, тет, вĕренӳре.
Çырăр, вулăр, —
Кĕнеке сире
Ылттăн уçăсем парать.

Ăсантах тыт эсĕ, пионер, —
Сталин пирĕншĕн чи пысăк пример:
Пур ăслă çынран та ăсларах этем вăл;
Пур аттесенчен те лайăхрах атте вăл.

1937.

## АВАН ПИРĔ!

Çулсем шăваççĕ „кĕр енне“:
Ентĕ чĕркум тулли ача:
„Чупту, атте!“
„Юрат, анне!“ —
Тесе, сикеççĕ утăкка.

Йăлтăртатаççĕ, кĕмĕл пек,
Ентĕ тăнлав çинче çÿçсем...
Нихçанхинчен те сирĕнпе
Телейлĕ эпĕ, ачамсем!

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул
Иртсен те, —
Çамрăк семьере
Мĕн чул эп вată, çавăн чул
Çап-çамрăк пулĕ ман чĕре!

Çĕршывăн чăн хуçи пулса,
Ватти-вĕтти —

Йăлтра питпе,
Эпир ак сыввăн та тасан
Çӳретпĕр Хĕрлĕ Площадьпе.

Аван пире!
Ыран татах
Аван пулассине пĕлсе,
Пурнасшăн эпĕ, тупата,
Вуншар çул мар,—
Çĕршер çулсем!

1930.

Редактор СТИХВАН ШАВЛЫ. Техредактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ.
Обложка Т. Д. ХАРЛАМПЬЕВА.

Послано в производство 4-III-40 г. Подписано к печати 11-IV-40 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1383. Заказ № 163. Ф. б. 60х62 1|32. Уч. авт. лист.—2,3 листа. Об'ем 1,75 печатных листа. Тираж 3000 экз.

г. Чебоксары. Типография 1 НКМП ЧАССР.

Хакĕ 2 т. 10 п.
Цена 2 р. 10 к.

Нестер Янгас

**ПОДАРОК**

*стихи*

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР